27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
МАРТ
20
ЫТЛАРИКУН
53(6804) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

СССР Совнаркомӗнче

1944 ҫулта вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн тата колхозсенчи выльӑх-чӗрлӗхсен хисепне ӳстерессишӗн облаҫсемпе крайсем тата республикӑсем хушшинче пынӑ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн итогӗсем ҫинчен

1944 ҫулта вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн тата колхозсенчи вылӑх-чӗрлӗхсен хисепне ӳстерессишӗн облаҫсемпе крайсем тата республикӑсем хушшинче пынӑ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн итогӗсене пӑхса тухса, СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ, ялхуҫалӑхӗнчи мӗнпур ӗҫсен планне тултарассишӗн, государство умӗнчи обязательствӑсене тата МТС ӗҫлесе панӑшӑн тӳлемелли натуроплатӑна парса татассишӗн, колхозсенче вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли государство планне тултарассишӗн, мӗн пур йышши вылӑх-чӗрлӗхсен хисепне ӳстерессишӗн тата государствӑна вылӑх-чӗрлӗх продукчӗсем парса татассишӗн пынӑ социализмлӑ ӑмӑртура 1944 ҫулӑн результачӗсем тӑрӑх ҫак облаҫсемпе крайсем тата республикӑсем мала тухнӑ тесе шутласа, ҫапла йышӑннӑ:

Вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн пынӑ ӑмӑрту енӗпе

1. Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавӗсене тата укҫан памалли премисене ҫаксене парас:

Пӗрремӗш премисене: Мускав облаҫне, Украина ССР-ӗнчи Киев облаҫне.

Иккӗмӗш премисене: Калинин облаҫне, Украина ССР-ӗнчи Полтава облаҫне, Ленинград облаҫне.

2. Ялхуҫалӑхӗнчи мӗнпур ӗҫсен планне тултарас тӗлӗшпе тата государство умӗнчи обязательствӑсене тата МТС ӗҫлесе панӑшӑн тӳлемелли натуроплатӑна парса татас тӗлӗшпе ҫаксем лайӑх ӗҫленине палӑртас: Белоруссии ССР-ӗ, Азербайджан ССР-ӗ, Армян ССР-ӗ, Грузин ССР-ӗ, Крым АССР-ӗ, Якут АССР-ӗ, Краснодар крайӗ, Украина ССР-ӗнчи Днепропетровск, Сталино, Черниговй облаҫӗсем, Ростов, Брянск, Иваново, Ярославль, Новгород, Киров, Вологда, Псков, Архангельск облаҫӗсем, Туркмен ССР-ӗнчи Марый облаҫӗ, Казах ССР-ӗнчи Караганда облаҫӗ.

Колхозсенчи вылӑх-чӗрлӗхсен хисепне ӳстерессишӗн пынӑ ӑмӑрту енӗпе

1. Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавӗсене тата укҫан памалли премисене ҫаксене парас.

Пӗрремӗш премисене: Мускав облаҫне, Казах ССР-ӗнчи Гурьев облаҫне,

Иккӗмӗш премисене: Дагестан АССР-не, Азербайджан ССР-не, Казах ССР-ӗнчи Караганда облаҫне.

2. Колхозсенчи вылӑх-чӗрлӗхсен хисепне ӳстермелли государство планне тултарас, мӗнпур йышши вылӑх-чӗрлӗхсен хисепне ӳстерес тата государствӑна вылӑх-чӗрлӗх продукчӗсем парса татас тӗлӗшпе ҫаксем лайӑх ӗҫленине палӑртас: Туркмен ССР-ӗ, Таджик ССР-ӗ, Армян ССР-ӗ, Украина ССР-ӗнчи Киев, Полтава, Сталино тата Ворошиловград облаҫӗсем.

1944 ҫулта вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн тата колхозсенчи выльӑх-чӗрлӗхсен хисепне ӳстерессишӗн районсем хушшинче пынӑ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн итогӗсем ҫинчен

1944 ҫулта вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн тата колхозсенчи вылӑх-чӗрлӗхсен хисепне ӳстерессишӗн районсем хушшинче пынӑ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн итогӗсене пӑхса тухса, СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ, ялхуҫалӑхӗнчи мӗнпур ӗҫсен планне тултарассишӗн, государство умӗнчи обязательствӑсене тата МТС ӗҫлесе панӑшӑн тӳлемелли натуроплатӑна парса татассишӗн, колхозсенче вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли государство планне тултарассишӗн, мӗнпур йышши вылӑхсен хисепне ӳстерессишӗн тата государствӑна вылӑх-чӗрлӗх продукчӗсем парса татассишӗн пынӑ социализмлӑ ӑмӑртура 1944 ҫулӑн результачӗсем тӑрӑх ҫак районсем мала тухнӑ тесе шутласа, ҫапла йышӑннӑ:

Вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн пынӑ ӑмӑрту енӗпе

Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавӗсене тата укҫан тӳлемелли премисене ҫаксене парас:

Ростов облаҫӗнчи Сальск районне
Горький облаҫӗнчи Богородск районне
Калинин облаҫӗнчи Красный Холм районне
Мускав облаҫӗнчи Коммунистически района
Чӑваш АССР-ӗнчи Вӑрнар районне
Новгород облаҫӗнчи Боровичи районне
Саратов облаҫӗнчи Маркс районне
Казах ССР-ӗнчи Осакар районне
Узбек ССР-ӗнчи Баскент районне
Туркмен ССР-ӗнчи Марый районне
Азербайджан ССР-ӗнчи Карягино районне
Грузин ССР-ӗнчи Гори районне
Украина ССР-ӗнчи Шпола районне
Украина ССР-ӗнчи Пятихатка районне
Украина ССР-ӗнчи Ирклеев районне.

Колхозсенчи вылӑх-чӗрлӗхсен хисепне ӳстерессишӗн пынӑ ӑмӑрту енӗпе

Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавӗсене тата укҫан тӳлемелли премисене ҫаксене парас:

Мускав облаҫӗнчи Кунцево районне
Казах ССР-ӗнчи Новобогатин районне
Дагестан АССР-ӗнчи Лакски района
Украина ССР-ӗнчи Селидовски района
Украина ССР-ӗнчи Васильков районне
Таджик ССР-ӗнчи Шахристан районне
Тула облаҫӗнчи Алексино районне
Астрахань облаҫӗнчи Мартыно районне
Армян ССР-ӗнчи Степанаван районне
Калинин облаҫӗнчи Бежецк районне
Грузин ССР-ӗнчи Цители-Цкаро районне
Архангельск облаҫӗнчи Холмогор районне
Туркмен ССР-енчи Дарганатин районне
Киргиз ССР-ӗнчи Тогуз-Торовски района
Азербайджан ССР-ӗнчи Мартунин районне.

ХУРТ-ХӐМӐР ӖРЧЕТЕС ӖҪЕН АСТИСЕНЕ ВӖРЕНТСЕ ХАТӖРЛЕНИ

СССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Аслӑ шкул комитечӗ хурт-хӑмӑр ӗрчетес ӗҫе вӗрентекен тӑватӑ кафедра организацилеме йышӑннӑ: Мускаври К. А. Тимирязев ячӗпе тӑракан ялхуҫалӑх академийӗнче, Киеври, Ташкентри тата Новосибирскри ялхуҫалӑх институчӗсенче. Воронеж облаҫӗнчи, Ставрополь, Приморски, Хабаровск, Красноярск крайӗсенчи ялхуҫалӑх техникумӗсемпе зооветеринари техникумӗсенче, пурӗ пилӗк техникумра, хурт-хӑмӑр ӗрчетес ӗҫе вӗрентекен отделенисем уҫаҫҫӗ. Ҫав кафедрӑсемпе отделенисенче кӗркунне вӗрентме пуҫлаҫҫӗ. (ТАСС).

БЕЛОРУССИРИ КОЛХОЗЛА ҪЕНЕ ЯЛАН ПРОЕКЧӖСЕМ

Белорусси ССР-ӗн Наркомземӗ 50—80 килллӗ колхозлӑ ҫӗнӗ ялӑн проектне хатӗрленӗ. Ҫавӑн пек ялта общественлӑ ҫуртсем—клуб, шкул, ача сачӗ, ача яслийӗ, магазин, производство мастерскойӗсем, вылӑх картишӗсем тума палӑртнӑ. Унта сырла сачӗсем те пулмалла.

Колхозлӑ ҫӗнӗ ялӑн проектне халь Белоруссири колхозниксен анлӑ массисем пӑхса тухаҫҫӗ. (ТАСС).

УКРАИНӐРИ АТӐ-ПУШМАК ПРОМЫШЛЕННОҪӖН ПРЕДПРИЯТИЙӖСЕМ ӖҪЛЕМЕ ПУҪЛАҪҪӖ

Киеври атӑ-пушмак ҫӗлекен 4-мӗш номерлӗ фабрика ӗҫлеме пуҫланӑ. Вӑл Украинӑри атӑ-пушмак предприятийӗсенчен чи пысӑкки шутланать. Нумаях пулмасть Харьковри, Артемовскри, Днепропетровскри тата Одессӑри атӑ-пушмак фабрикисем ӗҫлеме пуҫланӑ. (ТАСС).

ДОНБАСС ДНЕПРОСТРОЯ ПУЛӐШАТЬ

Днепропетровскри гидроэлектростанцие тӑвас ӗҫе пӗтӗм ҫӗршывпа пӗрле Донбасри ӗҫҫыннисем те активлӑн хутшӑнаҫҫӗ. Халӗ, Днепрогеса ҫӗнӗрен ура ҫине тӑратнӑ чухне, Донбасс каллех ӑна тӑванла пулӑшма кӑмӑл тунӑ.

«Сталинуголь» комбинатӑн шахтерӗсем Днепростроя кашни кварталтах, планран ирттерсе кӑларса, пӗрер эшелон ҫӗркӑмрӑк ярса тӑма сӑмах панӑ. Днепростроя яма халь Донбасри энергетиксем оборудованине электроматериалсем, Константиновкӑри рабочисем — кӗленче, Макеевкӑри труба тӑвакан рабочисем—чугун трубасем яма хатӗрлеҫҫӗ.

Облаҫри заводсем Днепрострой валли кулленех, планран ирттерсе, металл, кирпӗч, ытти тӗрлӗ строительство материалӗсем тата оборудовани туса кӑлараҫҫӗ. (ТАСС).

Хӗрлӗ Ҫар 27 ҫул тултарни ҫинчен Сталин юлташ кӑларнӑ приказа таджикла, узбекла, вырӑсла пичетлесе кӑларнӑ

СТАЛИНАБАД. мартӑн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Таджиксен государство издательстви Хӗрлӗ Ҫар 27 ҫул тултарни ҫинчен Сталин юлташ кӑларнӑ приказа уйрӑм кӗнеке туса таджикла, узбекла тата вырӑсла пичетлесе кӑларнӑ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАРТӐН 17-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Мартӑн 17-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем КЕНИГСБЕРГ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре нимӗҫ ҫарӗсен Хӗвелтухӑҫ Пруссири ушкӑнне пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫнӑ. БРАНДЕНБУРГ, ПОПЛИТТЕН, ПЕРШКЕН, ЛЕГНИТТЕН, ПРАУССЕН, ПАНИВИЦ, ВОРНИКАМ, ФОРДЕР-ФРОЙДЕНТАЛЬ, ДОЙЧ ТИРАУ, БИЛЬСХЕФЕН ялӗсене туртса илнӗ. Мартӑн 16-мӗшӗнче ку районра 700 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

ШТЕТТИН хули енче пирӗн ҫарсем нимӗҫсен ОДЕР шывӗн хӗвелтухӑҫ хӗрринчи плацдармне пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫнӑ, АЛЬТХОС, БЕРГЛЯНД, ВИЛЬХЕЛЬМСФЕЛЬДЕ, ФРАУЕНХОФ, РЕТДОРСФЕЛЬДЕ, ФЕРДИНАНДШТАЙН ялӗсене туртса илнӗ. Мартӑн 15-мӗшӗпе 16-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем 2.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ. Тыткӑна илнисен шутӗнче нимӗҫсен 402-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ ШЛЕЙНИЦ генерал-лейтенант пур.

БРЕСЛАУ районӗнче хулара хупӑрласа илнӗ тӑшман ҫарӗсен ушкӑнне пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ тата разведчиксем шыраса ҫӳренӗ.

Мартӑн 16-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 113 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 65 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ПИРЕН АВИАЦИ ЧЕХОСЛОВАКИРИ МОРАВСКА ОСТРАВА ЧУГУН ҪУЛ УЗЕЛНЕ ПЫРСА ТАПАННИ

Мартӑн 17-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн йывӑр бомбардировщиксем Чехословакири Моравска Острава чугун ҫул узелне пырса тапӑннӑ. Бомбӑсем пӑрахнине пула, чугун ҫул узелӗнче пушарсем тухнӑ. Пушарсенче вӑйлӑ взрывсем пулнӑ.

МАРТӐН 18-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Мартӑн 18-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем КЕНИГСБЕРГ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре нимӗҫ ҫарӗсен Хӗвелтухӑҫ Пруссири ушкӑнне пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫнӑ, хупӑрласа илнӗ унка малалла хӗстерсе пырса, 40 ял ытла йышӑннӑ, вӑл шутра — КОРШЕНРУ, ПАТЕРСОРТ, ЛЮДВИГСОРТ, ШВАНИС, РИППЕН, ЛАУКИТТЕН, ПРЕЙСИШ-ТИРАУ, ЛЕНХЕФЕН, МАЛЕНДОРФ, РЕФЕЛЬД, ГРЮНЕНФЕЛЬД ятлӑ пысӑк ялсем. Мартӑн 17-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче ку районра 800 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем, нимӗҫсен хупӑрласа илнӗ гарнизонӗ хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, мартӑн 18-мӗшӗнче Балтика тинӗсӗ хӗрринчи КОЛЬБЕРГ хулипе портне туртса илнӗ.

Чехословакире, ЗВОЛЕН хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре, пирӗн ҫарсем малалла тапӑнса пынӑ, ОСТРА ЛУКА, ШАШОВСКЕ ПОДГРОДЬЕ, ГОРНЕ ОПАТОВЦЕ, ГРОН шывӗ ҫинчи ГЛИНИК, ВИГНЕ ялӗсене туртса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ тата разведчиксем шыраса ҫӳренӗ.

Мартӑн 17-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 136 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 26 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Кенигсберг хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшманӑн Хӗвелтухӑҫ Пруссире хупӑрласа илнӗ группировкине хӗвелтухӑҫ енчен тата кӑнтӑр енчен хӗстерсе пынӑ. Нимӗҫсем, вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ ялсемпе, ҫӳллӗ вырӑнсемпе тата юханшывсемпе усӑ курса, хытӑ хирӗҫ тӑраҫҫӗ. Анчах та пирӗн ҫарсем пыра-пыра ҫапнипе тӑшман йышӑнса тӑракан ҫӗр лаптӑкӗ кашни кунах чакса пырать. Гитлеровецсене тинӗс хӗрринчи пӗчӗк участок ҫине хӑваласа кӗртнӗ. Пирӗн ҫарсем ӗнер нимӗҫсен тӗреклетнӗ паха пункчӗ пулса тӑракан Бранденбург ялне илнӗ хыҫҫӑн ҫӗрлехи ҫапӑҫусенче Фришинг шывӗн анат тӑрӑхӗнчи сулахай хӗррине тӑшмантан тасатнӑ. Паян ирхине гитлеровецсене чугун ҫул станцийӗпе шоссе ҫулӗсен узелӗ пулса тӑракан Людвигсорт ялӗ патне ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫӗнчен пырса кӗмелли ҫулсене хӳтӗлесе тӑракан пысӑк вӑрмантан сирпӗтсе кӑларнӑ. Унтан вара пирӗн пехота ҫав тери хӑвӑрт атакӑласа, Людвигсорт ялне туртса илнӗ. Ҫакӑнпа пӗр вӑхӑтрах совет чӑҫӗсем, Фриш Граф заливӗ хӗррипе наступлени туса пырса, 4 километр малалла кайнӑ та тинӗс хӗрринчи темиҫе яла туртса илнӗ. Браунсберг хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре, Кенигсберг хулипе Эльбинг хули хушшинчи автомобиль ҫулӗ тӑрӑхӗнче, вӑйлӑ ҫапӑҫусем пулса иртнӗ. Нимӗҫсем ку участокра дотсемпе дзотсем туса лартнӑ. Тӑшман позицийӗсене артиллери вӑйлӑн персе ҫӗмӗрнӗ хыҫҫӑн пирӗн ҫарсем нимӗҫсен оборонине татнӑ та Браунсберг хулинчен 8 километр кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре ларакан Грюненфельд ялне туртса илнӗ. Кун каҫиччен пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче 3.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла вӗлерсе пӗтернӗ, 19 танк, 39 хир туппи тата 170 пулемет пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейсем тытса илнӗ, вӑл шутра—11 танк, 4 бронетранспортер, 16 тупӑ тата 3 боеприпас склачӗ.

Тыткӑна лекнисем нимӗҫ ҫарӗсем питӗ пысӑк ҫухатусем тӳсни ҫинчен каласа кӑтартаҫҫӗ. Ҫапла, виҫӗ кун хушши пынӑ ҫапӑҫусенче 432-мӗш полкӑн 7-мӗш ротинче мӗнпур ҫынсен 80 процентӗ вилсе пӗтнӗ. Нимӗҫсен 50-мӗш дивизийӗн юлашкийӗнчен пӗр полк тума та ҫын пӗтӗмӗшпех ҫитеймен. Зенитнӑй тупӑсен 302-мӗш уйрӑм бригадинче пур тупӑсем те тенӗ пекех пӗтсе ҫитнӗ те, халӗ ҫав бригада пехота батальонӗ пулса ҫапӑҫать. Эсэсовецсен «Великая Германия» ятлӑ танковӑй дивизийӗнчи гренадерсен полкне юлашки ҫапӑҫусенче пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Белоруссири 1-мӗш фронт ҫарӗсем паян Кольберг хулине туртса илнӗ. Балтика тинӗсӗ хӗрринче ларакан Кольберг хулипе портне тӑшманӑн пысӑк гарнизонӗ хӳтӗлесе тӑнӑ. Ку гарнизона Померанире аркатса тӑкнӑ нимӗҫ дивизийӗсен юлашкийӗсене хушса парса вӑйлӑлатнӑ. Тӑшман хытӑ хирӗҫ тӑнӑ, вӑл хӑйӗн ҫарӗсене, хӗҫпӑшалне тата ытти вӑрҫӑ хатӗрӗсене Кольберг хулинчен тинӗспе илсе кайма кирлӗ чухлӗ вӑхӑт тупасшӑн пулнӑ. Анчах та нимӗҫсен ҫав шухӑшне пирӗн ҫарсем ӑнӑҫлӑн ҫапӑҫса пӗтерсе лартнӑ. Совет чӑҫӗсем ҫав тери хӑвӑрт пырса ҫапса, хулан Перзанте шывӗ ҫинчи хӗвеланӑҫ пайне туртса илнӗ те порта тупӑсемпе персе тӑма тытӑннӑ. Тӑшманӑн порта кӗме хӑтланнӑ темиҫе суднине шыва путарнӑ. Кун хыҫҫӑн вара хулан хӗвелтухӑҫ пайӗнче ҫапӑҫма тытӑннӑ. Енер пирӗн чӑҫсем Кольберг хулин чугун ҫул линийӗнчен кӑнтӑртарахри урамӗсене гитлеровецсенчен тасатнӑ. Урамсенче хаяррӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн Белоруссири 1-мӗш фронт ҫарӗсем, Польша ҫарӗпе пӗрле кӗрешсе, нимӗҫ гарнизонӗ хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та Кольберг хулипе портне пӗтӗмӗшпех туртса илнӗ. Хула урамӗсенче тӑшманӑн темиҫе пин вилли выртса юлнӑ. Трофейсем нумай тытса илнӗ. Тыткӑна нумай илнӗ.

* * *

Чехословакире, Зволен хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем сӑртлӑ-вӑрманлӑ вырӑнти йывӑр условисенче ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ. Тӑшман ҫӳллӗ вырӑнсем ҫинче тата тусен айккисенче тӗреклетнӗ пунктсем туса тултарнӑ та Грон шывӗн сулахай хӗрринчи плацдарма хӑй аллинче тытса тӑма тӑрӑшнӑ. Пирӗн пехотинецсем нимӗҫсене Остра Лука ялӗнчен сирпӗтсе кӑларнӑ та, шоссе ҫулӗпе малалла куҫса пырса, Грон шывӗ хӗррине тухнӑ. Ку районра тӑшман пехотин икӗ батальонне аркатса тӑкнӑ. 180 ҫынна тыткӑна илнӗ. Трофейсем нумай тытса илнӗ. Тепӗр участокра совет чӑҫӗсем гитлеровецсене тӗреклетнӗ пысӑк пункт пулса тӑракан Горне-Опатовце ялӗнчен сирпӗтсе кӑларнӑ, ҫавӑн пекех тата 5 ҫулӗ вырӑна йышӑннӑ. Ҫитӗнӗве малалла вӑйлатса пырса, пирӗн ҫарсем Грон шывӗн Зволен хулинчен хӗвеланӑҫнерехри сулахай хӗррине нимӗҫсенчен пӗтӗмпех тасатса пӗтернӗ. Тӑшман салтакӗсен уйрӑм ушкӑнӗсене Грон шывӗ хӗррине хӗстерсе лартса, пурне те пӗтерсе тӑкнӑ.

Ялсенчи художествӑллӑ пултарулӑхӑн республикӑри смотрӗ

Смотрӑн иккӗмӗш кунӗнче Элӗк районӗнчи коллективсем хӑйсен пултарулӑхне кӑтартса пачӗҫ. Кунта М. Белов ҫырнӑ «Ударта»» пьесӑна лартса панӑ. Чӑваш ташшисене ташланӑ, Волкова юлташ чӑваш юррисене аван юрласа кӑтартнӑ.

Смотрӑн виҫҫӗмӗш кунӗнче Ҫӗрпӳ, Канаш тата Чурачӑк районӗсен коллективӗсем хӑйсен пултарулӑхӗсене кӑтартрӗҫ. Вӗсенчен уйрӑмах лайӑх енӗпе Ҫӗрпӳ районӗн коллективне палӑртмалла. Ивановӑри «1905 мӗш ҫул» колхозӑн хорӗ вырӑс халӑхӗн ултӑ юррине юрласа пачӗ. Хора халӑх пултарулӑх енӗпе питӗ нумайранпа ӗҫлекен Илья Иванович Иванов ертсе пырать. Куракансем «Катенька—Катеринушка» ташша питӗ кӑмӑлласа кӗтсе илчӗҫ. Ҫӗрпӳ педучилищинче вӗренекенсем Андреевӑпа Борисова юлташсем «Прощанье» юрра кӑмӑллӑн юрласа пачӗҫ.

Канаш районӗн коллективӗ те хӑйӗн пултарулӑхне лайӑх енӗпе кӑтартрӗ. Драмкружок Горохова учительница ҫырнӑ «Аркатрӗҫ» пьесӑна лартса пачӗ. Мӑн Пикшик колхозӗн хорӗ чӑваш халӑх юррисене юрларӗ.

Чӑваш республики 25 ҫул тултарнине ӗҫри ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илер!

Ҫӗмӗрле комбинатӗнчи рабочисем, инженерла-техникла работниксемпе служащисем Чӑваш республикинчи промышленность предприятийӗсен мӗнпур работникӗсене

ЧӖНСЕ КАЛАНИ

ХАКЛА ЮЛТАШСЕМ!

Пирӗн совет халӑхӗ тата унӑн паттӑр Хӗрлӗ Ҫарӗ фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан Отечественнӑй вӑрҫӑн аслӑ ҫапӑҫӑвӗсенче историллӗ питех те пысӑк ҫӗнтерӳсем турӗҫ. Пирӗн нумай нацилле совет халӑхӗ, Ленин—Сталин партийӗ ертсе пынипе, хамӑрӑн Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхне хӳтӗлесе хӑварчӗ.

ССР Союзӗн халӑхӗсемпе пирӗн ҫӗршывӑн паттӑр воинӗсем, ирӗклӗхшӗн кӗрешес ӗҫри хӑйсен аслӑ миссине ӑнланнипе хавхаланса тата хӑйсен пӗтӗм вӑйне пухса кӗрешсе, ирсӗр тӑшмана—гитлерла вӑрӑхурахсен кӗтӗвӗсене—хӗвеланӑҫнелле ин:е хӑваласа ячӗҫ. Халӗ ӗнтӗ Хӗрлӗ Ҫар гитлерла тискер-кайӑкӑн йӑви патне—Берлин патне пымалли вырӑнсенче ҫапӑҫать.

Хӗрлӗ Ҫарӑн историллӗ пысӑк ҫӗнтерӗвӗсемпе хавхаланса, Совет Союзӗнчи халӑхсен тӑванла ҫемьинче пулса, чӑваш халӑхӗ, тӑшмана татӑклӑнах ҫӗнтерме фронта пулӑшас тесе, хӑйӗн вӑйне шеллемесӗр паттӑррӑн ӗҫлет. Чӑваш республикинчи промышленность предприятийӗсем фронт валли тата ӗҫҫыннисен пурнӑҫпа йӑла условийӗсене лайӑхлатма продукци туса кӑларассине ҫулран ҫулах ӳстерсе пыраҫҫӗ.

Пирӗн орденлӑ Чӑваш республики тырпул тухӑҫлӑхне ӳстернӗшӗн тата колхозсенче вылӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе вӑйлатнӑшӑн Отечественнӑй вӑрҫӑ ҫулӗсенче Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавӗсене икӗ хут илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

Сталин юлташ пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисене фронта пулӑшнӑшӑн икӗ хут телеграмма ярса саламларӗ тата Хӗрлӗ Ҫар ячӗпе тав турӗ.

Пирӗн комбинат коллективӗ 1944 ҫулта, 1945 ҫулхи январьпе февраль уйӑхӗсенче Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура иккӗмӗш тата виҫҫӗмӗш вырӑнсене йышӑнма пултарчӗ. Фронт валли продукци туса кӑлармалли 1944 ҫулхи плана срокчен, Сталинла Конституци кунӗ тӗлне, тултарчӗ. 1945 ҫулхи январь — февраль уйӑхӗсенчи плана та срокчен, Хӗрлӗ Ҫар 27 ҫул тултарнӑ кун тӗлне, пурнӑҫа кӗртрӗ.

Хаклӑ юлташсем—орденлӑ Чӑваш республикинчи промышленность предприятийӗсенчи рабочисем, работницӑсем, инженерсем, техниксем тата служащисем! 1945 ҫулхи июнӗн 24-мӗшӗнче историллӗ паллӑ кун пулать, вӑл кун Чӑваш Автономиллӗ Советлӑ Социализмлӑ Республикине тунӑранпа 25 ҫул тултарать.

Хамӑрӑн ҫулпуҫӑн Совет Союз Маршалӗн Сталин юлташӑн 1945 ҫулхи февралӗн 23-мӗшӗнче кӑларнӑ приказӗ ҫине ответлесе тата Чӑваш Автономиллӗ Республикине тунӑранпа 25 ҫул тултарнине палӑртас шутпа, Ҫӗмӗрле комбиначӗн коллективӗ республикӑри промышленность предприятийӗсен коллективӗсене Чӑваш республики 25 ҫул тултарнӑ ятпа социализмлӑ ӑмӑрту организацилеме чӗнет.

Чӑваш республики 25 ҫул тултарнине палӑртас майпа эпир ҫакӑн пек обязательствӑсем илетпӗр:

1. 1945 ҫулхи майӑн 15-мӗшӗ тӗлне завод работникӗсен укҫипе самолет туянмалла, ӑна «Чӑваш республики 25 ҫул тултарни» тесе ят памалла, вара ӑна Хӗрлӗ Ҫар фондне памалла.

2. 1945 ҫулхи июнӗн 15-мӗшӗ тӗлне ҫурҫул программине срокчен тултармалла.

3. Чӑваш республики 25 ҫул тултарнӑ кун тӗлне июнь уйӑхӗнчи программӑна срокчен пурнӑҫа кӗртмелле.

4. 1945 ҫулхи июлӗн 1-мӗшӗ тӗлне ҫурҫул программинчен ирттерсе пӗр полк валли кирлӗ чухлӗ специальнӑй продукци туса кӑлармалла.

5. 1945 ҫулхи пӗрремӗш ҫурҫулта продукцин хӑйне ларакан хакне планпа палӑртнинчен 1,5 процент чухлӗ чакармалла тата ӗҫ тухӑҫлӑхне 5 процент чухлӗ ӳстермелле.

6. Чӑваш АССР-ӗ 25 ҫул тултарнӑ кун тӗлне тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисем валли запаслӑ пайсем туса хатӗрлемелли пӗрремӗш ҫурҫул планне срокчен пурнӑҫа кӗртмелле. МТС-сене ӗҫре куллен практикӑллӑ пулӑшу парса пырас шутпа, Ҫӗмӗрле машинно-тракторнӑй станцине шефа илмелле.

7. Ҫар ҫыннисен ҫемьисене, Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсене пулӑшма завком ҫумӗнче 25 пин тенкӗ чухлӗ укҫа хывса фонд тумалла, ҫавна тума пӗр капмалли кун хушши ятарласа ӗҫлемелле.

8. Кӑҫалхи июнӗн 24-мӗшӗ тӗлне комбинат работникӗсен вӑйӗпе рабочисен поселокне юсаса илемлетес ӗҫе вӗҫлемелле.

9. Подсобнӑй хуҫалӑхра тата харпӑрхӑйӗн пахчисенче ҫурхи кампанине кӑтартуллӑн ирттермелле, акӑнакан ҫӗр лаптӑкне подсобнӑй хуҫалӑхра 25 процент, рабочисен харпӑрхӑй пахчисенче 10 процент чухлӗ ӳстермелле, пахча-ҫимӗҫсен лайӑх пӑхса ӳстерсе, пысӑк тухӑҫлӑ ҫимӗҫсем туса илмелле.

Фронта пулӑшма, ылханлӑ тӑшмана татӑклӑнах ҫӗнтерме хамӑрӑн пӗтӗм вӑйпа пултарулӑха парар!

Сывӑ пултӑр пирӗн ҫӗнтерӳллӗ Хӗрлӗ Ҫар!

Сывӑ пултӑр нумай нацилле Совет Союзӗ!

Сывӑ пултӑр Ленинӑн-Сталинӑн аслӑ партийӗ—гитлерла захватчиксене ҫӗнтерме Хӗрлӗ Ҫара хавхалантарса пыракан тата унӑн ҫӗнтерӗвӗсене организациленӗ!

Сывӑ пултӑр Чӑваш Автономиллӗ Советлӑ Социализмлӑ Республики—пирӗн орденлӑ республика 25 ҫул тултарни!

Сывӑ пултӑр пирӗн ҫулпуҫ тата учитель Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин юлташ!

Комбинатри мӗнпур работниксен митингӗ хушнипе чӗнсе калание ҫаксем алӑ пуснӑ:

Комбинат директорӗ ШАРОЙКО,
Партбюро секретарӗ ПОТАНИН,
Завком председателӗн заместителӗ БЛОХИН,
Главный инженер СЛУЦКИЙ,
ВЛКСМ Комитечӗн секретарӗ ШЕРЕМЕТЬЕВ.

Комбинатӑн чи лайӑх стахановецӗсем: слесарьсем: ПАСТУХОВ, БОНДАРЕНКО, РУДАКОВ, ИЩЕНКО; медник ВЕЛЕДИНСКИЙ; столярсем: ВОЛКОВ, ШАРАСЬКИН; столяр-сборщик НИКИТИН; комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригадисен бригадирӗсем: ЛОМТЕВ, КОРНЕЕВ, СЕРГУНИН; сварщик ДОГАЕВ; малярсем: НЕНАШЕВ, ФОМЕНКОВ, БОРЯГИНА, АГАШИНА.

СССР Верховный Совет Президиумӗнче

Закон тӑрӑх тата халаласа хӑварнӑ тӑрӑх наследник пуласси ҫинчен

Закон тӑрӑх тата халаласа хӑварнӑ тӑрӑх наследник пуласси ҫинчен СССР Верховный Совет Президиумӗ мартӑн 14-мӗшӗнче Указ кӑларнӑ.

Указра ҫапла каланӑ: закон тӑрӑх ҫаксем наследник пулма пултараҫҫӗ: вилнӗ ҫыннӑн ачисем (ҫав шутра—усрава илнисем те), унӑн мӑшӑрӗ, ӗҫлеме пултарайман ашшӗ-амӑшӗсем, ҫавӑн пекех тата вилнӗ ҫын хӑй виличчен ҫулталӑкран кая мар тӑрантарса пурӑннӑ ытти ҫынсем. Наследник хӑйне тивӗҫлӗ наследствӑна вилнӗ ҫыннӑн ачисен, наследство унӑн ачисен аллине куҫать, ачисем вилсен—ачисен ачисен аллине куҫать. Вилнӗ ҫыннӑн асӑннӑ наследникӗсем ҫук пулсан, е вӗсем наследство илессишӗн мар пулсан—закон тӑрӑх, унӑн ӗҫлеме пултаракан ашшӗ-амӑшӗсем наследник пулаҫҫӗ, вӗсем ҫук пулсан — унӑн пиччӗшӗсемпе аппӑшӗсем (е шӑллӗсемпе йӑмӑкӗсем) наследник пулаҫҫӗ.

Кашни ҫын хӑйӗн пӗтӗм пурлӑхне е унӑн пӗр пайне малта асӑннӑ ҫынсенчен пӗрне е темиҫе ҫынна, ҫавӑн пекех тата государство органӗсемпе общество организацийӗсене халаласа хӑварма пултарать. Анчах та вилекен ҫын хӑйӗн пӗчӗк ачисене тата ӗҫлеме пултарайман ытти членӗсене закон тӑрӑх вӗсене тивӗҫекен пайсӑр хӑварма пултараймасть. Закон тӑрӑх наследник пулма пултаракан ҫынсем ҫук пулсан — пурлӑха кирек кама та халаласа хӑварма юрать. (ТАСС).

Пахча-ҫимӗҫ вӑрлӑхӗсем акса тӑвас тӗлӗшпе ӗҫлекен бригадирсене хатӗрлеҫҫӗ

Кӑҫал хӗлле план тӑрӑх республикӑра пахча-ҫимӗҫ вӑрлӑхӗсем акса тӑвас тӗлӗшпе ӗҫлекен бригадирсене 50 ҫын вӗрентсе хатӗрлемеллеччӗ, паянхи кун тӗлне 62 ҫынна курссенчен вӗрентсе кӑларнӑ. Сӗнтӗрвӑрри районӗнче 12 ҫын вырӑнне 16 ҫын хатӗрленӗ. Курса «Сортсемовощь» агрономӗ А. К. Марасева ертсе пынӑ.

Курсра вӗреннисен пӗлӳлӗхне тӗрӗсленӗ чух вӗсем хӑйсен ӗҫне лайӑх пӗлни палӑрнӑ.

А. КУЗНЕЦОВА

МЕЛИТОПОЛЬРИ ЗАВОДРА СТАНОКСЕМ ТУМА ПУҪЛАНА

Мелитопольри станок завочӗн ҫӗнӗрен туса лартнӑ цехӗсенче станоксем тума пуҫланӑ. Нывӑҫ ӗҫлекен предприятисемпе машинно-тракторнӑй станцисем валли оборудованисен пӗр йышне туса кӑларнӑ ӗнтӗ. (ТАСС).

ВКП(б) Чăваш Обкомĕнче

Ишлей районĕнчи „Клевер" колхозра лашасене çураки валли мĕнле хатĕрлени çинчен

Çак кунсенче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ Ишлей районĕнчи «Клевер» колхозра лашасене çураки валли мĕнле хатĕрленине пăхса тухса сӳтсе-явнă.

Обком бюровĕ çакна палăртнă: «Клевер» колхоз хăйĕн лашисем валли 1944—45-мĕш çулта тăрантарма çителĕклĕ таран апат-çимĕç хатĕрлесе хунă. Мĕнпур лашасем валли утă çителĕклĕ пур, кунсăр пуçне, кашни лашана талăкра 1,5—2-шер килограмм сĕлĕ параççĕ. Çуркуннехи уйхир ĕçĕсем вăхăтĕнче тăрантарма кашни ĕçлекен лаша пуçне 15-шер пăт утă, 6-шар пăт тĕштырă уйăрса хăварнă. Колхоз лашисене яланлăха уйăрнă конюхсем пăхаççĕ, вĕсем ĕнтĕ 2 çултан пуçласа 5 çула çитиччен ĕçленĕ. Партипе правительство йышăннă решени тăрăх, пĕтĕ кĕсресене йывăр ĕçсенчен вăхăтра хăтараççĕ, кунта иртнĕ çул хушшинче кĕсресем хăм пăрахни пачах та пулман.

Анчах колхоз правленийĕпе пуçламăш парторганизаци лашасем ĕрчетесси çинчен СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1943 çулхи майăн 12-мĕшĕнче йышăннă постановлени пурнăçа кĕртессишĕн çителĕксĕр кĕрешеççĕ-ха. Ĕçлекен лашасене паянхи куна çитсе те вĕсемпе тăтăшах çӳрекенсем çумне çирĕплетмен. Çапла, сĕмахран, «Соболь» ятлă лашапа юлашки 16 кун хушшинче 4 колхозник улшăнса ĕçленĕ. Лашапа ĕçлекенсем çавăн пек тăтăшах улшăнса тăнине тата лаша çине хуçасăррăн пăхнине пула, асăннă лаша уксахлама тытăннă, тепĕр икĕ лашине вара ĕнерчĕк е сӳсмен тивертсе сураплатса пĕтернĕ.

Колхозра конюхсене ĕçшĕн тӳлемелли инструкцие пăсаççĕ, ялхуçалăх артелĕн уставĕ кăтартса панисене пăхăнса пымаççĕ. Конюхсене вĕсем çумне çирĕплетнĕ лашасен мĕнлине пăхмасăрах ĕçкунĕсем тӳлеççĕ. Лашасемшĕн çавăн пек çителĕксĕр тăрăшнине пула, 30 ĕç лашинчен мăн-ăррисем 2 лаша кăна, 13 лаша вăтам ӳт-пӳллĕ, 12 лаша начарланса кайнă, 3 лаша вара пачах та ырханланса çитнĕ. Хăмăтсемпе ытти кӳлмелли хатĕрсем тата транспорт инвентарĕ колхозниксен килĕсенче сапаланса выртаççĕ, вĕсене юсас ĕçе йĕркелемен. Ĕçлекен 30 лаша пуçне кӳлмелли юсавлă хатĕрсем 26 комплект кăна пур. Урапасемпе плугсене, сӳресемпе сеялкăсене тата ытти тĕрлĕ инвентаре юсассине паянхи кунччен те йĕркелемен.

Колхозра мăйракаллă шултăра выльăхсемпе ĕçре усă курасси çине çавăрăнса пăхмаççĕ. Туртăм вăйĕ çителĕксĕр тесе, колхозра лашасене пĕрре те канăç памаççĕ, вырсă çула çитмен çамрăк лашасене те йывăр ĕçсенче ĕçлеттереççĕ. Çав вăхăтрах ĕне выльăхсемпе колхоз ĕçĕсенче кăна мар, колхозниксен харпăрхăй ĕçĕсене тунă çĕрте те (вутă турттарнă тата ытти çĕрте) усă курмаççĕ.

Колхоз правленийĕпе пуçламăш парторганизаци лашасем ĕрчетес ĕçе лайăхлатасси çинчен хăйсен ларăвĕсемпе колхозниксен пухăвĕсенче сӳтсе-явмаççĕ. колхозниксене артель хуçалăхне çирĕплетес ĕçре лаша мĕн тери паха вырăн йышăнса тăни çинчен ăнлантарса памаççĕ, çапла вара вĕсем хăйсен лашисене çураки валли лайăхрах хатĕрлесе çитерме колхозниксене мобилизацилемен. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1943 çулхи майăн 12-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, лашасене пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕçри обезличкăна пĕтересси çинчен, кӳлмелли хатĕрсемпе ытти тĕрлĕ инвентаре çураки валли хатĕрлесси çинчен колхозри пуçламăш парторганизацин пухăвĕсенче те сӳтсе-явмаççĕ. Уйрăм колхозниксен айăпĕпе лашасем вилни тата вĕсене стройран кăларни çинчен колхозниксен пухăвĕсенче сӳтсе-явса тивĕçлĕ мерăсем йышăнни пулман.

ВКП(б) Ишлей райкомĕ лашасем ĕрчетес тата вĕсене çурхи уйхир ĕçĕсем валли хатĕрлес ĕçре «Клевер» колхозри пуçламăш парторганизацине çителĕксĕр ертсе тырать.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ, çак ыйтăва пăхса тухса, «Клевер» колхозăн правленине, унăн председательне Морев юлташа тата пуçламăш парторганизаци секретарьне Кудряшов юлташа çак постановленире палăртнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма тата лашасене çурхи уйхир ĕçĕсем валли лайăхрах хатĕрлесе çитерме хушнă. Çывăх вăхăтсенчех парторганизацин уçă пухăвне туса ирттермелле, пухăва колхозниксене явăçтармалла. Çав пухура СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Колхозсемпе совхозсенче лашасен йышне ӳстермелли, вĕсене пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕçе лайăхлатмалли мерăсем çинчен» 1943 çулхи майăн 12-мĕшĕнче йышăннă постановлене сӳтсе-явмалла, çав решение пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе татăклă ĕçсем палăртса хумалла.

Мĕнпур ĕç лашисене вĕсемпе çӳрекенсем çумне халех çирĕплетсе, çав колхозниксен аллине лашасемпе çӳреме ирĕк паракан удостоверенисем памалла. Ĕçрен таварăннă лашасене конюхсем обязательнăй йĕркепе пăхса тухса йышăнассине тата лашасене е суранлатни е амантни палăрсан, çавăн çинчен çиĕнчех колхоз председательне пĕлтерессине çирĕп йĕрке туса хурас пулать.

Конюхсене ĕçшĕн тĕрĕс мар тӳлесе пырассине пĕтермелле тата, конюхсене ĕçре хавхалантарас шутпа, кăçалхи март уйăхĕнчен пуçласа конюхсене кашни лаша мĕнлине кура ĕçкунĕсем шутласа памалла тăвас пулать. Кашни уйăх вĕçĕнче колхоз правленийĕн, ревизи комиссийĕпе пĕрле, лашасем мĕнлине тĕрĕслесе тухмалла тата конюхсене ĕçшĕн тӳлемелли инструкци тăрăх кашни лашашăн кунсерен çакăн чухлĕ ĕçкунĕ шутласа памалла тăвас пулать: лашасем начар ӳт-пӳллĕ пулсан—0,09 ĕçкунĕ, лашасем лайăх ӳт-пӳллĕ пулсан—0,12 ĕçкунĕ шутласа памалла. Кунсăр пуçне, чи лайăх конюхсене лашасене лайăх пăхнашăн вĕсем ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕсем çумне 10 процент чухлĕ çĕнĕрен хушса тӳлемелле.

Парти Обкомĕн бюровĕ Ишлей çĕрĕç пайĕпе ВКП(б) райкомне лашасене пăхмалли, тăрантармалли тата ĕçлеттермелли шалти йĕркесен правилине тунă çĕрте колхоза пулăшма хушнă. Конюхсен лашасене кунсеренех тасатса тăмалла йĕрке тăвас пулать, çав ĕç валли кашни конюха щеткăсемпе хыркăçсем тупса памалла. Уйăхра пĕр хутран кая мар лашасен чĕрнисене тасатса тухмалла тата лашасем тăракан вырăнсене куллен обязательнăй йĕркепе тасатса пымалла.

Халсăрланнă е ырханланнă лашасене, вĕсем ĕçлеме пултаракан пуличченех, канма тата лайăх апатлантарма тăратас пулать. Çав лашасем вырăнне колхозăн шалти ĕçĕсенче ĕне-выльăхсемпе усă курмалла, вĕсене çапла майпа çураки вăхăтĕнче ялхуçалăх ĕçĕсенче ытларах ĕçлеттерме вĕрентсе çитерес пулать.

«Клевер» колхозра лашасем валли сĕлĕ пĕр тăруках вунăкунлăх çырса илсе конюхсен аллине панине парти Обкомĕн бюровĕ тĕрĕс мар тесе шутлать. Колхоз председательне Морев юлташа кунĕнепе çапла йĕрке тума хушнă: лашасене тăрантармалли апат-çимĕçе колхоз складĕнчен конюхсен аллине 1—2 кунлăха кăна памалла.

Колхоз правленийĕн колхозниксен килĕсенче сапаланса выртакан мĕнпур кӳлмелли хатĕрсене, çунасемпе урапасене пухса, вĕсене юсас ĕçе организацилемелле. Кăçалхи мартăн 25-мĕшĕччен колхозри мĕнпур ĕç лашисемпе кӳлме вĕрентнĕ ĕнесем валли кӳлмелли хатĕрсемпе транспорт инвентарĕ çителĕклĕ таран юсаса хумалла. Çав вăхăт тĕлнех çуракинче кирлĕ плугсемпе сӳресене, сеялкăсемпе ытти ялхуçалăх инвентарьне те юсаса ĕлкĕртмелле.

Колхозри парторганизаци секретарĕн Кудряшов юлташăн колхозра лашасем ĕрчетес ĕç мĕнле пулса пынине парторганизаци енчен тăтăшах тĕрĕслесе пымалла тата çав ыйтусене коммунистсен пухăвĕсенче сӳтсе-явмалла тăвас пулать. Уйрăм колхозниксем лашасем çине киревсĕррĕн е чунсăррăн пăхнине хирĕç кĕрешме мĕнпур колхозниксене мобилизацилемелле. Лашасене стройран кăларни е лаша вилни çинчен калакан кашни фактах колхоз правленийĕнче тата колхозниксен пухăвĕсенче обязательнăй йĕркепе сӳтсе-явмалла. Лашасене лайăх пăхассишĕн, вĕсемпе тĕрĕс усă курассишĕн конюхсем тата уйхир бригадисем хушшинче социализмлă ăмăрту организацилемелле.

Тихасене йышăнса пăхса çитĕнтересси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхас пулать. Кĕсресемпе çамрăк тихасене уйрăммăн апатлантарассине тата пăхассине организацилемелле, пĕтĕ кĕсресем хăм пăрахни тата тихасем вилни пулмалла мар. Тихасене пăхма ятарласа уйрăм конюх çирĕплетес пулать.

Чехословаки республикин Президенчĕ Эд. Бенеш господин тата Чехословаки республикин Премьер-Министрĕ Я. Шрамек господин Мускава килни

Чехословаки республикин Президенчĕ доктор Эдуард Бенеш хăйĕн арăмĕпе пĕрле, Лондонран Чехословакие кайнă май, мартăн 17-мĕшĕнче Мускава килнĕ. Президентпа пĕрле Чехословаки республикин Премьер-Министрĕ Ян. Шрамек господин, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Ян. Масарик господин, Чехословаки республикин Мускаври Посолĕ Зд. Фирлингер господин, çавăн пекех тата чехословаксен политикăллă тĕрлĕ партийĕсен представителĕсем те килнĕ. Баку хулинчен пуçласа, Президентпа пĕрле СССР Наркоминделĕн Протокол отделĕн Заведующийĕ Ф. Ф. Молочков тата СССР Наркоминделĕн 4-мĕш Европа отделĕн Заведующийĕн Помощникĕ А. Н. Абрамов ларса килнĕ.

Центральнăй аэродромра Эд. Бенеш господина тата унпа пĕрле килнĕ çынсене СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель Заместителĕ СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский, СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. Ф. Горкин, Ф. И. Голиков генерал-полковник, СССР Наркоминделĕн 4-мĕш Европа отделĕн Заведующийĕ В. А. Зорин, Мускав хула Совечĕн Исполкомĕн Председатель Заместителĕ М. А. Яснов, Мускав хули коменданчĕ К. Р. Синилов генерал-лейтенант, Оборона Халăх Комиссарначĕн Тулашри çыхăну отделĕн Начальникĕ М. П. Кутузов генерал-майор, СССР Наркоминделĕн Протокол отделĕн Заведующийĕн Заместителĕ Г. И. Фомин, Словаксен Халăх Совечĕн В. Шробар доктор ертсе пыракан делегацийĕ, Чехословаксен 1-мĕш корпусĕн Командующийĕ Л. Свобода генерал, Прага Парламенчĕн членĕ К. Готвальд, Зд. Неедлы профессор, Чехословаки Посольствипе Çар Миссийĕн дипломатиллĕ составĕ тата ыттисем те хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

Аэродромра çавăн пекех тата çаксем пулнă: Великобритани Посолĕ А. К. Керр господин, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Посолĕ В. Гарриман господин, Югослави Посолĕ С. Симич господин, Канада Посолĕ Д. Уилгресс господин.

Хирĕç тухса кĕтсе илнĕ чухне хисеплĕ хурал тăратнă. оркестр Чехословакипе Совет Союзĕн государство гимнĕсене каланă. Аэродрома Чехословаки республикипе Совет Союзĕн флагĕсене çакса илемлетнĕ.

Эд. Бенеш Президент калани

Чехословаки Республикин Президенчĕ Эд. Бенеш доктор, Мускава çитсен, микрофон умĕнче çапла каланă:

«Хĕрлĕ Çарпа пирĕн пур союзниксен çарĕсем паттăррăн кĕрешсе ирĕке кăларакан хамăр Тăван çĕршыва каймалли çул Мускав урлă выртать. Ку ĕнтĕ пирĕн пĕрлĕхлĕ туслăха тата пирĕн союзлă çыхăнусене тата ытларах çирĕплетсе парать.

Тăшмана часах аркатса тăкса Европăна каллех ирĕке кăларассине эпĕ шанса тăратăп».

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ КОБЛЕНЦ ХУЛИНЕ ЙЫШАННĂ

ЛОНДОН, мартăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен 3-мĕш армийĕн чаçĕсем мартăн 17-мĕшĕнче Кобленц хулине кĕрсе кайнă.

ЛОНДОН, мартăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă тăрăх, союзниксен Рейн çинчи укреплениĕн тăршшĕ 21 километра, урлăшĕ 11,2 километра çитет.

Союзниксен укреплениĕн варринче нимĕçсем вăйлăн хирĕç тăраççĕ. Укреплени çурçĕр пайĕнче союзниксен çарĕсем Кенигсвинтерта çапăçаççĕ, кăнтăр пайĕнче Вид шывĕн хĕвеланăç çыранне çитнĕ.

Кобленцран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Мозель шывĕ урлă каçнă. Союзниксен ытти чаçĕсем Рейн шывĕнчен 3,2 километрта ларакан пункт патне çитнĕ.

Саарбрюккенпа Рейн хушшинчи районра союзниксен çарĕсем пĕр чарăнмасăр çурçĕрелле кусса пыраççĕ.

Гардт тăвĕсен районĕнче тата Çурçĕр Эльзас тӳремĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем тунă.

ЛОНДОН, мартăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Италире 5-мĕш арми чаçĕсем нимĕçсен Апеннинри Вергато ятлă тĕреклетнĕ пунктĕнчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре çĕнĕрен пырса çапнă та Сальваро хули патне çитнĕ. Вăл хула Болоньяран 15 миля кăнтăр-хĕвеланăçнерехре ларать.

ЛОНДОН, мартăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: союзниксен Рейн çинчи укреплениĕн тăршшĕ халь 22,5 километра, урлăшĕ 12 километра çитет. Союзниксен çарĕсем Иттенбах тата Хюшейд хулисене кĕрсе кайнă.

Çав укреплени вăтаçĕртипе кăнтăр пайĕсенче 5 хула йышăннă. вăл шутра—Кобленц хули. Хĕвелтухăç тата кăнтăр-хĕвелтухăç еннелле наступлени туса пыракан пехота чаçĕсем 9,6 километр тăршшĕнче Рейн шывĕ çине тухнă. Боппард хулине кĕрсе кайнă. Тăшман хирĕç тăнине сирсе пăрахса, танковăй отрядсем Наэ шывĕ хĕррине тухнă. Танксем хыççăн пыракан пехота темиçе хула йышăннă.

Триртан кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксем Томма хулине тата Саарбургран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре 5 хула тытса илнĕ. Союзниксен çарĕсем Римлингена кĕрсе кайнă.

Саарбрюккен районĕнче союзниксен çарĕсем Рейн еннелле 15 километр кунă та, Зигфрид линийĕ патне çитсе, унăн тулашри оборона сооруженийĕсене йышăннă. Йышăнса илнĕ хуласем хушшинче Саарбрюккен хулинчен 14 километр хĕвелтухăçнерехре ларакан Нидервюрцбах хули пур (Баварире). Унтан хĕвелтухăçнерехре Зигфрид линийĕн оборона сооруженийĕсем умĕнче Хорнбах хулине тата Германири Бити хулинчен тата Лотарингири Рольбинген хулинчен 16 километр çурçĕр-хĕвеланăçнерехре ларакан Дигригинхен хулине тытса илнĕ. Рейн шывĕн секторĕнче союзниксем Анат Эльзасри Ширгейн районĕнче çапăçаççĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ БЕРЛИНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, мартăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 18-мĕшĕнче американецсен авиацийĕ кăнтăрла Берлина питĕ йышлăн вĕçсе кайса тапăннă. «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши 1.300 бомбардировщикпа «Мустинг» йышши 700 истребитель вĕçсе кайнă. Хулари транспорт объекчĕсене тата промышленноçлă районсенчи çар заводĕсене тапăннă.

Тапăну пĕр сехет ытла пынă, çав вăхăтра кашни секундра хула çине пĕрер тоннăна яхăн бомба пăрахнă. Хула çине пĕтĕмпе 3.000 тонна ытла фугаслă тата вут тивертекен бомбăсем пăрахнă.

РУМЫНИРЕ ПОМЕЩИКСЕН ÇĔРĔСЕНЕ ХРЕСЧЕНСЕНЕ ВАЛЕÇСЕ ПАРАÇÇĔ

БУХАРЕСТ, мартăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Хресчен комитечĕсем помещиксен 50 гектартан ытлашши çĕрне туртса илсе фронтовиксен çемьисене тата çĕрсĕр хресченсемпе сахал çĕрлĕ хресченсене валеçсе параççĕ.

Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, март уйăхĕнчен пуçласа Влашка уездĕнче помещиксен 5.200 гектар çĕрне валеçсе панă. Телеорман уездĕнче—3.460 гектар, Яломиц уездĕнче —3.170 гектар валеçсе панă тата ытти те.

Яломиц уездĕнче тата ытти уездсенче те хресченсем помещиксен çĕрĕсене валеçме уйрăм комитетсем организациленĕ. Ильфов уездĕнчи Фресинет ялĕнче хресченсен комитечĕ помещиксен ытлашши 490 гектар çĕрне туртса илнĕ те çĕрсĕр хуçалăхсемпе сахал çĕрлĕ хуçалăхсене валеçсе панă.

Ильфову уездĕнче Баршть ялĕнче хресченсен пухăвĕ пулса иртнĕ. Пухура тухса каланă «Çĕрĕ фончĕ» организацин представителĕсем хресченсене нациллĕ-демократиллĕ фронтăн программине ăнлантарса панă. Пуху вырăнти помещикăн ытлашши 100 гектар çĕрне туртса илсе салтаксен, тăлăх арăмсен тата вăрçă инваличĕсен çемьисене валеçсе пама йышăннă.

Телеорман уездĕнчи Сетарх Валя ялĕнче хресченсен комитечĕ паллă фашистка пулнă Мария Теолосиу çĕрне туртса илме йышăннă. Вăл легионерсен полицийĕн начальникĕ пулса ĕçленĕ.

НАЦИОНАЛ-ЦАРАНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ПРЕДСЕДАТЕЛĔ МАНИУ ВЫРАНТАН ТУХНА

БУХАРЕСТ, мартăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Румыни хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, национал-царанистсен партийĕн председателĕ Маниу вырăнтан тухнă. Национал-царанистсен партийĕн яланхи делегацийĕ партин председателĕ пулма Н. Лупуна суйланă.

БОЛГАРИРИ ХАЛĂХ СУЧĔ ЙЫШАННА ПРИГОВОР

СОФИЯ, мартăн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарин телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 15-мĕшĕнче çар çыннисен пĕр ушкăнне суд туса пĕтернĕ. Вăл çынсене Гитлер майлă политика тытса пынăшăн, Болгари патриочĕсене хĕсĕрленĕшĕн тата вĕсене пĕтерсе пынăшăн айăпланă.

Верховнăй халăх сучĕ Болгарин генеральнăй штаб начальникĕсем пулса ĕçленĕ Трифоновпа Лукаша, Димитров, Каров, Наков, Николов генералсене, ытти генералсемпе полковниксене тата подполковниксене, çавăн пекех тата кĕçĕн чинри 10 çынна вĕлермелле тунă. Болгарин сывлăш-çар флочĕн командующийĕ пулса ĕçленĕ Айранов генерала, Жидков генерала тата ытти 23 офицера ĕмĕрлĕхе каторгăна ямалла тунă. 8 офицерпа салтака 10-шар çуллăха, 10 çынна 5 çуллăха каторгăна ямалла тунă. Петков генерала тата 25 ытти офицера хăтарнă.

Айăпланисен пурлăхне государство аллине памалла тунă.

ЭАМ ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕМ МАКМИЛЛАНРАН ЫЙТНИ

ЛОНДОН, мартăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: мартăн 14-мĕшĕнче ЭАМ (халăхăн ирĕклĕх фрончĕн) представителĕсем Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи министр-резидентĕнчен Гарольд Макмилланран «Греци ыйтăвне пăхса тухма союзниксен комиссине» васкаса тума ыйтнă.

ЭАМ представителĕсем каланă тăрăх, Греци правительстви Греци халăхĕн мĕнпур сийĕсен правительстви пулса тăмасть. «Эпир,—тенĕ ЭАМ представителĕсем,—пирĕн аслă союзниксем Грецире халь пулса иртекен ĕçсене, шалтипе тулашри ларуса тăрăва хăрушлатса тăраканскерсене, курмасăр иртсе каймĕç тесе шанса тăратпăр»,—тенĕ.

КĔСКЕН

▲ Рапоккойки поселокĕнче (Финляндире) шюцкоровецсен хĕçпăшал складне тупнă.

▲ София хулинче Болгарири рабочисен профсоюзĕсен конгресĕ уçăлнă.

Вăрлăхлăх тырă параççĕ

КӲКЕÇ, мартăн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). Мартăн 15-мĕшпе 16-мĕш кунĕсенче кашни колхозрах колхозниксен пухăвĕсем пулса иртрĕç. Çав пухусенче колхозниксем вăрлăх çитмен колхозсене вăрлăхлăх тырă парса пулăшасси çинчен сӳтсе-яврĕç. Иккассси ял Советне кĕрекен «Первое мая» колхоз—180 пăт, Крупская ячĕпе тăракан колхоз—150 пăт, «Правда» колхоз—120 пăт, «Кормилец» колхоз—120 пăт пама йышăннă. Вĕсем çав кунах вăл тырра Заготзерно складне леçсе панă. Колхозсенчен пĕлтернĕ тăрăх, паянхи кун тĕлне районĕпе 4.200 пăт Заготзерно складне леçнĕ.

Я. НИКИТИН.

Колхозăн производствăллă планĕ—малашнехи ĕçсен программи

Колхозсем ял пикенсех çуракине хатĕрленет. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ ялхуçалăхне аталантармалли 1945 çулхи план çинчен йышăннă постановленире колхозсем умне пысăк та ответлă ĕçсен программине кăларса тăратрĕç. Çав постановлене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пырсан кăна тырпул, çĕрулми, пахча-çимĕç, техникăллă культурăсем тухăçлă туса илме, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ăнăçлă тултарма пулать.

СССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ—колхозсен, МТС-сен, совхозсен, çĕрĕç органĕсен, партипе совет организацийĕсен 1945 çулхи тĕп задачи — тырпулсен тухăçлăхне пур майсемпе те ӳстересси, пухса илекен тĕштырăсен тата ытти ялхуçалăх продукчĕсен пĕтĕм хисепне ӳстересси пулса тăрать, тесе кăтартса пачĕç.

Çак тĕп задачăна никĕсе хурса, пирĕн колхозсен хăйсен пĕтĕм ĕçне тĕплĕн палăртса производствăллă плансем тумалла. Производствăллă планра вăйлă тырпул туса илмелли, выльăх-чĕрлĕхсен йышĕпе вĕсен продуктивноçне ӳстермелли майсене кăтартса памалла.

Вăрçă вăхăтĕнче ĕç вăйĕпе туртăм вăйне тĕрĕс те пĕлсе вырнаçтарни калама çук пысăк вырăн йышăнать. Çакă вăл ялхуçалăхĕнчи ĕçсене вăхăтра пурнăçласа пынипе пĕрлех, государство умĕнчи тĕрлĕ обязательствăсене те срокра тултарма май парать. 1945 çулхи производствăллă план хуçалăхри мероприятисене пухса çырса хуни кăна мар. Вăл кашни колхозăн Отечественнăй аслă вăрçăра мĕнле хутшăнса ĕçлемеллине кăтартса паракан кĕрешӳ программи пулса тăрать. Производствăллă план колхозниксемпе колхозницăсене партипе правительство лартнă задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе конкретлă ĕçсем кăтартса памалла.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ ялхуçалăхне аталантармалли план çинчен йышăннă постановленире 1945 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕччен кая юлмасăр колхозсен производствăллă планĕсене туса çитерме хушаççĕ. МТС-семпе колхозсем хушшинчи договорсене, çавăн пекех колхозсенчи уйхир бригадисен ĕç планĕсене те тумалла, çав плансенче бригадăсемпе уйрăм колхозниксем çумне мĕнле ĕç хатĕрĕсем çирĕплетессине, колхозниксене уйрăм ĕçсене вырнаçтарса тухассине палăртса хумалла. Партипе правительство колхозсен производствăллă планĕсене тумалли срока кăçал конкретлăн кăтартса пачĕç. Производствăллă плана вăхăтра туни пĕтĕм ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Анчах иртнĕ çул нумай колхозсенче производствăллă плансене питĕ кая юлса турĕç. Çуракине тухас умĕн мĕнпур колхозсенчен 15 проценчĕ производствăллă плансене туса пĕтерменччĕ. Уйрăмăнах производствăллă плансем тăвас ĕç Куславкка, Кувакино, Пăрачкав, Шăмăршă тата Çĕмĕрле районĕсенче тăсăлса пычĕ. Çапла вара çак районсенчи нумай колхозсем çуракине организациллĕ ыйтусем тĕлĕшпе хатĕрленсе çитмесĕр тухрĕç. Иртнĕ çулхи йăнăшсене кăçал тумалла мар. Анчах чылай колхозсенче кăçал та пусуçаврăнăшĕсене йĕркелесси, пусуçаврăнăшĕ тăрăх палăртнă уйхирсенче мĕнпур культурăсене тĕрĕс вырнаçтарса тухасси пусуçаврăнăшĕсем пулман çĕрте кăçал акакан культурăна малтан çав культурăшăн лайăх культура пулнă вырăна акасси çинчен тĕплĕн шухăшласа план тума тытăнман-ха. Районри çĕрĕç пайĕсем халĕ кашни колхозах мĕнле культурăна мĕн чухлĕ акма кирлине кăтартса панă. Чăн та, çав заданисем хăшпĕр чухне нумаях мар улшăнма пултараççĕ, вăл улшăнусем производствăллă планра пысăк вырăн йышăнмаççĕ. Анчах производствăллă планпа культурăсене пусуçаврăнăшĕ тăрăх вырнаçтарса тухнă чухне, агротехника мероприятийĕсене тата удобренисене тăкмалли ĕçсене палăртнă чухне, агрономăн колхозра обязательнăй йĕркепе пулмалла. Колхоза мĕн чухлĕ удобрени кирлине тата çав удобрение ăçтан тупмаллине, хăçан хире кăлармаллине тĕплĕн шутласа хумалла.

Кашни культурăн тухăçлăхĕ мĕнле пулмаллине те палăртмалла. Çак енĕпе кашни бригадăпа звенона задани памалла. Тырпул тухăçлăхĕ иртнĕ çулсенчинчен кая пулмалла мар. Тырпул тухăçлă пуласси тăпраран, ăна удобренипе çемçетнинчен нумай килет. Çавăнпа та кашни бригадăна е звенона тырă тухăçлăхĕ тĕлĕшпе пĕр пек задани памалла мар; пĕрне—пысăкрах, тепĕрне пĕчĕкрех задани памалла, анчах уйрăмлăх 1,5—2,0 центнертан ытла пулмалла мар. Паллах, çĕрулми, тымар-çимĕç тата пахча-çимĕç тухăçлăхĕн уйрăмлăхĕ бригадăсемпе звеносем хушшинче пысăкрах пулма пултарать. Техникăллă культурăсен тухăçлăхĕпе бригадăсене задани панă чухне çав уйрăмлăх гектар пуçне 0,5 центнертан ытла пулмалла мар. Тырпул тухăçлăхĕ пирки звеносемпе бригадăсене задани пани колхозниксене тырпул тухăçлăхне ӳстерессишĕн кĕрешме мобилизацилет.

Тырă тухăçлăхне ӳстермелли майсене план туса палăртас тĕлĕшпе Куславкка районĕнчи «Динамо» колхоз лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Колхоз председателĕ Ефремов юлташ колхозăн производствăллă планне тунă чухне çав ĕçе пысăк опытлă колхозниксене анлăн явăçтарать. 1944 çулхи участокĕсен уйрăмлăхне хăш участокра мĕнле тырă лайăхрах пулнине, колхозри бригадăсене тырă тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе мĕнле ĕçсем хушмаллине колхозниксемпе пĕрле сӳтсе-явса йышăнаççĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн постановленийĕ тăрăх кашни колхозра кашни уйрăм культура енĕпе вăрлăх участокĕсем уйăрмалла, çав участоксене уйрăм звеносем çумне çирĕплетмелле.

Колхозри ĕçе. тĕпрен илсен, производствăллă план тăрăх туртăм вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухни татса парать. Ялхуçалăх ĕçĕсенче, лашасемсĕр пуçне, вăкăрсемпе, хĕсĕр ĕнесемпе усă курассине те пăхмалла. Туртăм вăйĕ çитмест пулсан, колхозниксен сĕт сахал паракан ĕнисемпе те усă курмалла пулать. Анчах колхозниксен ĕçе уйăрнă ĕнисемпе, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн постановленийĕнче хушнă пек, ялан тенĕ пекех çав ĕнесен хуçисем ĕçлеме тивĕçлĕ. Ĕнесемпе ĕçлеме пăхсан, вĕсем валли хăмăтсемпе ытти инвентаре хатĕрлемелле, вĕсене çине тăрсах кӳлсе çӳреме вĕрентмелле.

Уйхир ĕçĕсен мĕнпур тапхăрĕ валли уйхир бригадисем çумне ĕç лашисемпе вăкăрсене çирĕплетсе памалла, бригадăсенче вара уйрăм колхозниксем çумне çирĕплетсе тухмалла.

Производствăллă план туна чухне колхозри ĕç вăйĕсене тĕрĕс шута илмелле. вĕсемпе ĕçта усă курмаллине палăртса хумалла. Ĕç нормисене тата ĕçшĕн тӳлемелли йĕркесене пăхса тухмалла та вĕсене колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕнче сӳтсе-явса çирĕплетмелле. Вăкăрсемпе тата ĕнесемпе ĕçлекенсене хавхалантарас шутпа, ĕç нормине лашасемпе ĕçлекенсеннинчен пĕчĕккĕрех, ĕçшĕн тӳлемеллине вара пысăкрах тусан лайăхрах пулать.

Ĕçĕн организациллĕ енĕсем кăçал яланхи пекех пысăк вырăн йышăнаççĕ. Колхозри ĕç дисциплинине çирĕплетсе пымалла. Бригадăсемпе звеносем хăйсен умне лартнă ĕçсене агротехника кăтартнă срокĕсенче тума тивĕçлине çирĕп палăртса хумалла. бригадăсенче хăйсен ĕçне пĕлекен сухаçсем, акакансем, машинистсем пулмалла. вĕсене кашни бригадăна пĕр пек вырнаçтармалла. Анчах уйрăм çынсене пĕр бригадăран тепĕр бригадăна куçарни бригадăна çĕнĕрен туса йĕркелесси патне илсе пымалла мар. Бригадăсене пĕрлештерни те усăллă мар, мĕншĕн тесен пĕчĕкрех бригадăсем лайăхрах ĕçлеме пултарнине колхозри опыт уçăмлăн кăтартса пачĕ.

Иртнĕ çул звеносене организацилес тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пулчĕç. Çуркунне вĕсен шучĕ ытла та пысăкчĕ, кĕркунне тĕлне вара вĕсем нумайĕшĕсем саланса пĕтрĕç. Звеносем—бригадăн уйăрăлми пайĕсем, çавăнпа та бригадăри пĕтĕм туртăм тата ĕç вăйĕсене звеносем тăрăх уйăрса çирĕплетсе памалла. Тĕрĕс организациленĕ звеносем пирĕн республикăра паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Звеносем çумне уйрăм участоксем, чи малтан техникăллă культурăсемпе вăрлăх участокĕсене тата клевер акнă участоксене çирĕплетсе памалла.

Производствăллă планра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли, выльăх апачĕн базине тумалли мероприятисене те палăртмалла. Выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстерессине, çамрăк выльăхсене пăхса илсе çитĕнтерессине пĕтĕмпех çирĕп плана кĕртмелле.

Производствăллă плана тунипе пĕрлех приходпа расход сметине те тумалла. Çак ĕçе тунă çĕре ревизи комисси членĕсене явăçтармалла. Колхозра çĕнĕ строительство тума пăхнă пулсан, ун валли укçа-тенкĕ мĕн чухлĕ кирлине тата çав укçа-тенкĕне ăçтан тупмаллине сметăра тĕплĕн палăртмалла. Иртнĕ çул чылай колхозсенче приходпа расход сметисене ялхуçалăх çулĕ вĕçленес умĕн кăна турĕç. Паллах, çакă вăл колхоз пурнăçĕнче нимĕ те пĕлтермен япала кăна пулса тăчĕ. Уйрăмăнах çавăн пек тĕслĕхсем Кувакино, Пăрачкав, Чкаловски, Шăмăршă тата Çĕмĕрле районĕсенчи колхозсенче нумай пулчĕç. Приходпа расход смети вăл—производствăллă планăн уйăрăлми пайĕ, çавăнпа ăна халех тумалла.

Производствăллă план тунă чухне СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Ялхуçалăхне аталантармалли 1945 çулхи план çинчен» йышăннă постановлене тĕп никĕсе хумалла, план тăвас ĕçе колхозниксен анлă массине явăçтармалла. Колхоз правленийĕн тата агрономăн çак ĕçе тивĕçлипе ертсе пымалла.

Колхозăн производствăллă планĕ вăйлă тырпул туса илес тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре калама çук пысăк вырăн йышăнать. Районри çĕрĕç органĕсенчи работниксем, ялхуçалăх специалисчĕсем колхозсене производствăллă план тунă çĕрте куллен пулăшса, ертсе пыма тивĕçлĕ.

Производствăллă план туса пĕтернипе, паллах, ĕç чарăнса тăмалла мар. План тăрăх пăхнă мероприятисене пурнăçлассишĕн бригадăпа бригада, звенопа звено ăмăртса ĕçлемелле. Çав ăмăрту халĕ, çуракине хатĕрленнĕ чухне, уйрăмах анлăн сарăлса каймалла. Мĕншĕн тесен çакă вăл пĕтĕм ялхуçалăх çулĕн ăнăçлăхне татса паракан майсенчен пĕри пулса тăрать.

Партипе совет тата çĕрĕç работникĕсен СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Ялхуçалăхне аталантармалли 1945 çулхи план çинчен» йышăннă постановление кашни бригадăпа звенона, кашни колхозникпе колхозницăна тĕплĕн ăнлантарса памалла. Çак постановленире кăтартнă калама çук паха мероприятисене пурнăçлас шутпа, кашни колхозрах производствăллă план тумалла. Планпа пăхнă мероприятисене пурнăçлама колхозниксен анлă массине мобилизацилемелле.

И. КОСМИНСКИЙ,
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн планпа финанс пайĕн начальникĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ редактора н — 0—67, заместителĕн — 0—23, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—37, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31.

НТ 00546 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000